# Чун ăшшине, илемне парать вăл çынсене

*Уямасăр ырра, усала*
*Пурăнма, тен, чăнах та пулать,*
*Анчах чун ăшшине, илемне*
*Мĕн çитет çынсене панине?*

**Зоя СЫВЛĂМПИ**

«Каçа хирĕç пике килет, çĕр каçиччен çĕрте ларать, ире хирĕç тăрса ларать, хĕвеле курсан кулса ярать...» Çакăн пек хитре те ытарлă тупмалли юмах пур чăваш халăхĕн. Тупсăмне нумайăшĕ пĕлет-тĕр: ку – сывлăм. Çут тĕнчен çак илĕртӳллĕ пулăмне сăнарлакан тепĕр каларăша та асăнса хăварасах килет: «Чупса-чупса пынă чух кĕмĕл çĕррĕм тухрĕ ӳкрĕ, ăна уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ». «Уйăх курса хĕвел илнĕ» пике вăл – Зоя Сывлăмпи поэтесса. Ахальтен мар 2011 çулта çырнă «Хĕвел çути» сăввине вăл çак хавхалануллă йĕркесемпе вĕçлет:

Телейлĕ эпĕ халĕ питĕ,
Савăнтарать кунçул утти,
Сирĕлекен çак тĕтĕм витĕр
Халь сăрхăнать хĕвел çути!

Шăпах хĕвел йăл-йăл кулса пăхнă чух, ылтăн кĕркунне, сентябрĕн 17-мĕшĕнче иртрĕ Зоя Сывлăмпин пултарулăх каçĕ. Чăваш наци библиотекин тăваттăмĕш хутĕнчи «Мерчен» юрă-кĕвĕ залне халăх йышлă пуçтараннăччĕ. Зоя Леонидовнăн тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем, çыравçăсемпе юрă-кĕвĕ ăстисем поэтессăн пурнăç хăй лартса панă икĕ «пиллĕкне» – 55 çулне – паллă тума кăна мар, унăн «Юрату ахрăмĕ» çĕнĕ кĕнекине пахалама та ыр вăхăтпа ырă кăмăл тупнăччĕ: 15 сехетрен пуçласа 18 ирттиччен пычĕ-çке сăвă-такмакпа юрă-кĕвĕ уявĕ!

Вунна яхăн кĕнеке авторĕ, Раççей Федерацийĕн писательсен союзĕн членĕ, Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕпе ентешлĕхĕн П.Ялкир ячĕллĕ премийĕ лауреачĕ Зоя Леонидовна Полякова-Алексеева /Сывлăмпи/ 1960 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи Тури Çĕрпӳкасси ялĕнче çуралнă. Çыравçă ентешĕсем килнĕ уява тата Муркаш, Шупашкар районĕнчи фольклор ушкăнĕсем те. 100 ытла юрă авторĕ Зоя Сывлăмпи, çавăнпа та пултарулăх каçĕнче ытларах унăн сăввисемпе кĕвĕленисем янăрарĕç. Халăхра анлă сарăлнă «Анне ăшши» юрра вара Елена Османова хăй шăрантарчĕ.

Поэта поэт кăна вĕçне çитиех ăнланма пултарать теççĕ... Тен, çавăнпах Зоя Сывлăмпи пултарулăхĕ çинчен ырă сăмах калакансем хушшинче хĕрарăм çыравçăсем йышлă пулчĕç: Раиса Сарпи, Марина Карягина, Альбина Юрату, Лидия Филиппова тата ыттисем те. Клавдия Вишневская сăмахĕсене блокнот çине çырсах хутăм: «Ун пек ăшă çын çук та пулĕ çĕр çинче».

Зоя Сывлăмпи хăйĕн сăввисенче час-часах «телей» сăмахпа усă курать, ун тупсăмне шырать: «иртни» ытлашшиех савăнтарман пулас ăна. Ак, тĕслĕхрен, 2012 çулта çырнă «Кĕрлерĕ аслати» сăвари юлашки çаврăм:

Йĕпеннĕ курăк савăнса
Телей куççулĕ пек çиçет!
Иртни çинчен йăлтах манса
Ман чунăм кайăк пек вĕçет!

Зоя Леонидовнăн Литература çулталăкĕнче иртнĕ çак пултарулăх каçĕ «ĕнерхи кун» пулса юлчĕ ĕнтĕ, çапах та ун телейлĕ саманчĕсем поэт асĕнчен нихăçан та тухас çук: малашнехи пултарулăх çул-йĕрне çутатсах тăрĕç вĕсем.

**Римма ПРОКОПЬЕВА**